*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

# Сувар

5№ (475)
эрнекун
кăрлач
уйăхĕн
(январĕн)
31-мĕшĕ,
2003 çул

Республиканская общественно-политическая чувашская газета
Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ


## РЕДАКЦИРИ ЛАРУ

Кăрлачăн 28-мĕшĕнче ЧНКА канашĕн анлă ларăвĕ «Сувар» редакцийĕнче иртрĕ. Кун йĕркинче çапларах ыйтусем пулчĕç: 2002 çулăн пĕтĕмлетĕвĕсем, 2003 çулта еплерех ĕçсем тума палăртни (март уйăхĕнче автономи конференцине ирттересси, чăваш предпринимателĕсен ассоциацине, вĕрентӳпе культура ĕçченĕсен пĕрлешĕвне йĕркелесе ярасси, «Сувар» редакцийĕн вунăçуллăхне еплерех уявласси, чăвашсен чаплă арĕсен И.Н.Юркин, И.Я.Яковлев, Н.В.Никольский юбилейĕсене паллă тăвасси, районсенче йĕркелӳ конференцийĕсене ирттерсе пĕтересси) тата ытти те. Канаш юхăмĕ çинчен тĕплĕнрех çитес номерте вулăр.

**Хамăр корр.**

## ТАВА ТИВĔÇЛĔ

Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕпе Хусанти чăвашсен П.Хусанкай ячĕллĕ обществăпа культура центрĕн председателĕн çумне **Василий Афанасьевич ДЕДУШКИНА** Тутарстан Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне панă. Хисеплĕ ентешĕмĕре сумлă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

# СĔТ ТУТЛАНАТЬ...





Пăвари çу тата чăкăт комбиначĕ республикăра пысăккисенчен пĕри. Кунта лайăх пахалăхлă продукци кăлараççĕ. Ăна ĕçре чылай опыт пухнă Фанис Фатахович Шайхатаров ертсе пырать. Предприяти пĕлтĕр 79 миллион тенкĕлĕх продукци кăларнă, малтанхи çулпа танлаштарсан, 6 процент ытларах.

Директор çумĕ Г.М.Байрамова çапла пĕлтерет:

— Иртнĕ çулта районти хуçалăхсенчен вунпилĕк пин тонна сĕт илтĕмĕр. Уйрăм çынсем те икĕ пин тонна сĕт пачĕç. Пĕр литршăн тăвата тенкĕ те сакăрвунă пус тӳрех тӳлетпĕр. Пуринчен ытларах сĕт тăратакан хуçалăхсем: «Гигант», «Узяк», «Татарстан», «Коммуна», «Марс», «Родина», «Рассвет». Эпир лавккасене сĕт ултă пин тонна, тăватçĕр ултă тонна çу, çичçĕр аллă тăватă тонна чăкăт ăсатнă.

Комбинатра халĕ технологине çĕнетес енĕпе пысăк ĕç пуçланнă. Кăçал сĕтрен продукци кăларакан тĕп цеха ĕçе кĕртмелле. Çавăн хыççăн комбинат тата лайăхрах сĕт-çу, чăкăт, хăйма, кефир, ряженка тата ытти те кăларма тытăнать.

**Николай СТЕПАНЦЕВ.**

**Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: Гульшат Ахметзянова лаборантка (сулахайра) тата Тамара Артемьева аслă мастер; Таскира Минюкова çу тăвакан.**

СЫВЛĂХ

## ПĔЛТĔРХИНЧЕН ИКĔ ХУТ САХАЛТАРАХ

— Грипп тата шăнса пăсăлнипе çыхăннă ытти чирсем Хусанта анлă сарăлассинчен хăрама кирлĕ мар, — пĕлтерчĕ хулари санитарипе эпидемиологи надзорĕн центрĕн эпидемиологи уйрăмĕн заведующийĕ Елена Бугрова. — Сывлăх сыхлав управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, çакнашкал инфекциллĕ чирсемпе чирлесси пĕлтĕрхи декабрь вĕçĕнче — кăçалхи январьте анлă сарăлмаллаччĕ. Телее, ку чăна килмерĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал ерекен инфекциллĕ чирсемпе асапланакансем икĕ хут сахалтарах.

Прививкăсем тăвас плана 108 процент таран ӳстерсе пурнăçлани — акă çак ырă ларутăрăвăн сăлтавĕ. Хусанти чылай организацисемпе предприятисем халь хăйсен ĕçченĕсене прививкăсем тутарассине йăлана кĕртнĕ. Шкулсемпе ытти ачапăча учрежденийĕсенче те çак тивĕç çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

— Прививка тутаракансем тĕрĕс тунă, — тет Хусанти санитарипе эпидемиологи надзорĕн тĕп врачĕ Алмас Имамов. — Мĕншĕн тесен прививка çине 1 тенкĕ тăкаклани çав предприятин 25 тенкине упраса хăварать. Хăвăрах шухăшласа пăхăр, çын чирлесен ăна больничнăй хутшăн тӳлеме мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кирлĕ...

Çапах та санитари врачĕсем чирлеменнисене те, пĕрре чирлесе ирттернисене те ал усма хушмаççĕ, мĕншĕн тесен вируссем тĕрлĕрен пулаççĕ. Профилактикăшăн ремантадин е дибазол ĕçме сĕнеççĕ тухтăрсем. Сыхланакана Турă та сыхлать тет мар-и-ха?

**Вера АЛЕКСАНДРОВА.**

60 ÇУЛ ÇИТРĔ

# СТАЛИНГРАД ВĂЛ — ÇĔНТЕРӲ



1942 çулхи вăрçă планне хатĕрленĕ чухне Гитлер Сталина улталама шутлать. Мускав енчи 70 дивизине вăл ниçта та куçармасть, кунта пысăк наступлени пуçланмалли курăнтăр тет. Çулпуç чăнахах та çапла шутлать.

Анчах та вăрттăн план тăрăх фашистсем кăнтăралла вăркăнаççĕ. Кавказ тăвĕ патне тухаççĕ, Крыма ярса илеççĕ. Пирĕн Хура тинĕс флочĕ 250 кун хӳтĕленĕ хыççăн Севастополе хăварать. 1942 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче фашистсем Новороссийска кĕреççĕ, анчах та унăн хĕвелтухăç енче пирĕн çар тăшмана пӳлет, урăх вăл ку çулпа Кавказ еннелле пĕр утăм та тăваймасть. Тепĕр çул — Туапсе патĕнче — каллех тăшмана чараççĕ. Кавказ урлă та фашистсен егерĕсем каçаймаççĕ. Кунти нефть вырăнĕсене Гитлер ярса илеймест.

Ун шучĕпе, Сталинграда илсен Кавказ пуянлăхĕ патне Атăл тăрăх тухма пулать. Сталинграда илсен Япони те вăрçа хутшăнма хатĕрленет. Апла тăшмана Атăл çине кăларма юрамасть. 1942 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче ку хулашăн çав тери пысăк çапăçу пуçланать. Кунĕн-çĕрĕн юн юхать Атăл шывне. Икĕ енĕ те нихçан пулман çухатусем тӳсеççĕ. Анчах та Хĕрлĕ Çар парăнмасть, тăшмана тытса чарать, хăй вăрттăн операци хатĕрлет, наступленине куçма тĕллев лартать. Малтанлăха Георгий Жуков ку енĕпе нумай ĕçлет. Операци çывхарнă май Сталин ăна урăх фронта куçарать. Фашистсем шутланă тăрăх, Жуков урăх çĕрте операци хатĕрлет. Улталаççĕ хальхинче Гитлера. Ноябрĕн 19-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнчи фашистсене çавăрса илес тĕллевпе наступлени пуçлать. Гитлерăн 22 дивизийĕ тыткăна лекет. Унăн командующийĕ генерал-фельдмаршал Паулюс, унпа пĕрле тата 21 генерал Хĕрлĕ Çар аллине лекеççĕ...

Сталинградри çапăçу 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче вĕçленет. Фашистла Германи пуçне усать. Урăх вăл Хĕвелтухăçĕнчи фронтра çĕнтерӳ тăваймасть.

Сталинград хыççăнах Новороссийск патĕнче операци пуçланать. Кунта Цезарь Куников десанчĕ фашистсен ушкăнĕн варринех кĕрсе каять. Леонид Брежневăн «Малая земля» кĕнекинче ун çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Кĕнекере пĕр суя сăмах та çук. Генсек хăйĕн рольне çеç кăшт пысăклатнă. 1943 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнче фашистсене Новороссийск патĕнче те çĕмĕрсе тăкаççĕ. Вĕсем Кавказа кураймасăрах каялла чакаççĕ.

Çапла Сталинград Çĕнтерӳ хĕвелне чĕртет...

**Александр ИВАНОВ,**
**Николай СТЕПАНЦЕВ.**

## *«ТĂХĂРЬЯЛ» АВТОРНЕ ЧЫСЛАРĔÇ*

Çак кунсенче чăвашсен паллă этнографĕ Г.Т.Тимофеев çуралнăранпа 125 çул çитрĕ. Вăл хальхи Чăваш Республикине кĕрекен Куславкка районĕнчи Тĕрлемес ялĕнче çуралса ӳснĕ, чапне вара Тутарстанри Пăва районĕнчи Тăхăрьял тăрăхĕнче тупнă. Ахальтен мар шăпах çак ялсенче Г.Т.Тимофеева чысласа пысăк мероприятисем иртрĕç. Чи малтанах, январĕн 21-мĕшĕнче, Тĕрлемесре чăваш культура ăсчахĕсем пухăнчĕç. Унта пирĕн республикăран Пăва районĕнчи Элшелти вырăнти хăйтытăмлăх канашĕн председателĕ В.А.Афанасьев ертсе килнĕ делегаци тата Тутарстанри ЧНКА канашĕн членĕсем В.А.Дедушкинпа Л.П.Серебряков та хутшăнчĕç.

Ку эрнере вĕсем Элшел ялне, юбилейлă каçа пуçтарăнчĕç. Çакăнта Шупашкартан килнĕ хăнасем Г.Т.Тимофеевăн нумай пулмасть иккĕмĕш кăларăмпа пичетленсе тухнă «Тăхăрьял» кĕнекипе паллаштарчĕç. Юлашкинчен чаплă концерт иртрĕ. Ун çинчен тĕплĕнрех çитес номерсенче вулама пултаратăр.

**Игорь МАТВЕЕВ.**

## *ИПОТЕКА ПУÇЛАНАТЬ*

ТР патшалăх кил-çурт фончĕ республикăра ипотека кредичĕсен программипе килĕшӳллĕн çуртсем тума тытăнать. Проект тăрăх тепĕр икĕ çултанах Хусан центрĕнче пулнă кивĕ çуртсем вырăнне çĕнĕ, хăтлă хваттерсем ӳссе ларĕç. Ку ĕçе пуçласа яма республика фонда 50 миллион тенкĕ уйăрнă. Ипотека йĕркипе килĕшӳллĕн хваттер туянма шутланă çынсем банкран укçа-тенкĕ илмелле те малтанах хваттер хакĕн 5–10 процентне тӳлемелле. Хваттерсенче вĕсем пĕр-икĕ çултанах пурăнма пуçлаççĕ, укçине вара 10–15 çул хушшинче тавăрмалла.

## *ÇĂКĂР ПĔÇЕРЕКЕНСЕМ КАНАШЛАРĔÇ*

Кăрлачăн 29-мĕшĕнче «Елабужский пищекомбинат» хупă акционер обществинче республикăра çăкăр пĕçерекенсен канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Вăл çак отрасльти республика предприятийĕсен 2002 çулти ĕçĕсене пĕтĕмлетрĕ.

Çаплах 2003 çул задачисене те сӳтсе яврĕç. Канашлăва çăкăр пĕçерекен 20 завод, министерствăсемпе ведомствăсен, ТР суту-илӳпе тулаш экономика çыхăнăвĕсен министерствин, федерацин стандартизаципе метрологин тата сертификацин Тутарстанри центрĕн представителĕсем хутшăнчĕç. Кунсăр пуçне канашлу ĕçне район тата хула администрацийĕсен пуçлăхĕсен иккĕмĕш çумĕсене те явăçтарчĕç. Вĕсем вырăнта паха çăкăр пĕçерессипе яваплăхра тăраççĕ.

«Татхлеб» УАО специалисчĕсемшĕн Тутарстан Республикин Министрсен Кабинечĕ 2002 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче йышăннă 579-мĕш номерлĕ постановленийĕ тĕп вырăнта пулчĕ. Вăл республика халăхне паха çăкăрпа, çăнăхпа, макарон изделийĕсемпе тивĕçтерме, çаплах çăкăр пĕçерме экологи япăх çĕрте сывлăха çирĕплетме май паракан хушусем кĕртме сĕнет.

**Виталий ЕЛТОВ.**